## Район прокуратуринче

# Парăмсене вăхăтра татас пулать

Хальхи вăхăтра ял хуçалăх предприятийĕсенчен чылайăшĕнче укçа-тенкĕ тĕлĕшĕпе епле лару-тăру пулни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Продукци туса илесси чакса пырать, парăмсем ӳсеççĕ. Вĕсене вара парса татмах тивет.

Апла пулин те çак йывăрлăхран тухма майсем шыракансем тата тупакансем çук мар. Вĕсем налуксене те, парăмсене те вăхăтра тӳлесе татма пултараççĕ, ĕçлекенсене ĕç укçи те уйăхсерен тӳлеççĕ.

«Сеятель» пĕрлешӳллĕ хуçалăх пирки вара çакна калаймăн. Хуçалăх юлашки 2-3 çул хушшинче тĕрлĕ предприятисем умĕнче пысăк парăмсене кĕрсе пынă, вĕсене татасси пирки шутласах кайман. Анчах ялан парăма кĕрсе пырса та май çук-çке-ха. Çавна май Чăваш Республикин Арбитраж сучĕ 2005 çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче хуçалăхран «Моргаушагропромхимия» уçă акционер обществине 184895 тенкĕ те 25 пус, 2005 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче РФ Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленине 22 пин те 761 тенкĕ те 40 пус, 2005 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче РФ Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленине 26 пин те 500 тенкĕ те 31 пус, Етĕрнери «Агроремтехсервис» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна 17 пин те 757 тенкĕ те 96 пус, 2005 çулхи февралĕн 18-мĕшĕнче çав предприятиех 10 пин те 744 тенкĕ те 92 пус, 2005 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Ярапайкассинчи «Агроинвестсервис» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна 21 пин те 937 тенкĕ те 67 пус, «Ударник» сăнавпа производство хуçалăхне 80 пин те 752 тенкĕ те 65 пус шыраса пама йышăнусем тунă.

Кунсем майĕпен иртсе пынă, хуçалăх ертӳçи Алексей Юрьевич Соловьев вара парăмсене татасси пирки ытлах шутласа кайман. Суд приставĕсем ăна Арбитраж сучĕн йышăнăвĕсене пурнăçламанни хакла ларма пултарасси пирки пĕр хут кăна мар асăрхаттарни те пулăшман.

Кунсăр пуçне хуçалăх ертӳçи, 2006 çулхи январĕн 4-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 29-мĕшĕччен ăна касса операцийĕсем ирттернĕ чухне укçа-тенкĕ тăкакლассин виçине 50 процент чакарма кирли пирки пĕлтернĕ пулин те, укçа-тенкĕ кассăна пырса кĕни пирки фактсене приставран пытарнă, укçа-тенкĕпе исполнительнăй документсенчи требованисене пурнăçлас тĕллевпе усă курман. Çапла вара А.Ю. Соловьев Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 315 статйипе пăхнă преступленисене тунă.

Хуçалăхăн тĕп бухгалтерĕ Р.Н. Волкова çавна кăтартса панă. А.Ю. Соловьев «Сеятель» хуçалăх ертӳçинче 2004 çулхи март уйăхĕнчен тытăнса ĕçлет. Кооперативăн финанс хатĕрĕсемпе, çав шутра касса урлă каяканнисемпе те, вăл хăй пĕлсе усă курать. Мĕнле суммăпа мĕнле усă курасси унран килет. Кассăна килсе кĕрекен пĕтĕм суммăн 50 процентне суд йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн хуçалăхăн парăмĕсене парса татма куçармалли пирки йышăну пулнине вăл пĕлет, анчах та çакна тума майсем пулман. Мĕншĕн тесен вăл хуçалăх ертӳçине тӳрремĕнех пăхăнса тăрать, ертӳçĕрен вара парăмсене парса татма укçа куçарасси пирки хушу пулман.

«Сеятель» хуçалăх бухгалтерĕ Н.С. Андреева та çавăн йышши кăтартусемех панă. Вăл касса документĕсене тытса пырассишĕн ответлă. Хăй пĕлнĕ пек укçа-тенкĕ куçарассипе йышăнусем тăваймасть. Тĕпрен илсен, ун патне хуçалăх ертӳçипе тĕп бухгалтер алă пусса панă документсем кăна килеççĕ. Суд йышăнăвĕпе кассăна килекен пĕтĕм суммăн 50 процентне парăмсене тӳлесе татма куçармалла пулнă пирки вăл пĕлет. Анчах çакна хăй тĕллĕн тăваймасть. Кассăна суд приставĕ темиçе хут та тĕрĕсленĕ. 2006 çулхи январĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса 2006 çулхи мартăн 29-мĕшĕччен кооператив кассине 480 пин тенкĕне яхăн укçа пырса кĕнĕ. Вăл шутран 10 пин те 837 тенкĕ ĕç укçи тӳлеме, 257 пин тенкĕ тата 7 пин те 652 тенкĕ ссуда тӳлеме, ытти сумма вара кооперативăн тăкакĕсене саплаштарма кайнă.

Свидетельсем – суд приставĕ С.А. Бархоткин, «Моргаушагропромхимия» чикĕллĕ яваплăхлă общество юрисконсульчĕ Д.Н. Игнатьев, Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн районти управленийĕн юрисконсульчĕ Н.В. Порфирьева, «Агроремтехсервис» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи П.В. Петров, «Ядринагропромстрой» чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçи Ю.В. Болотин, унăн çумĕ С.В. Малов, предприятин тĕп бухгалтерĕ Л.В. Захарова, «Ударник» сăнавпа производство хуçалăхĕн юрисконсульчĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ И.Е. Федоров кăтартса панисем те «Сеятель» хуçалăх ертӳçи парăмсене татассипе тивĕçлĕ мерăсем йышăнманнине кăтартса параççĕ.

Майăн 16-мĕшĕнче 1-мĕш суд участокĕн миравай судйи çак ĕçе пăхса тухнă, Арбитраж сучĕн йышăнăвне пурнăçламаншăн, парăмсене татассипе тивĕçлĕ мерăсем йышăнманшăн хуçалăх ертӳçине Алексей Юрьевич Соловьева Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 315-мĕш статйипе айăпласа унран 9 пин тенкĕ шыраса илме йышăннă.

***Асăннă статья районти ытти хăш-пĕр хуçалăхсен ертӳçисемшĕн те çĕнĕлĕх мар. Акă, парăмсене татассипе тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттерменшĕн тата Арбитраж сучĕн йышăнăвĕсене пурнăçламаншăн 2005 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче «Хлебороб» хуçалăх ертӳçине Родион Леонидович Каргина 10 пин тенкĕ, 2006 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче Ленин яч. хис. хуçалăх ертӳçине Андрей Владимирович Гаврилова 6 пин те 500 тенкĕ штрафлама йышăннă.***

**Ю. СЕМЕНОВ,**
**район прокурорĕн çумĕ.**

## Редакци почтинчен

# Анне

Анне... Çак сăмах кашни çыншăн чи çывăх, чи юратнă сăмах. Вăл çепĕççĕн те илемлĕн янăрать. Ахальтен мар çак çут тĕнчере унран пахи, унран илемли, унран хакли никам та çук.

Аннесем тĕрлĕрен пулаççĕ: сарăрах, хурарах, çӳллĕрех, пĕчĕкрех. Анчах та вĕсем пурте хăйсен ачисене юратнипе, вĕсемшĕн чунне пама хатĕррипе пĕр евĕрлех пулĕ. Пирĕншĕн, ачисемшĕн, ырми-канми ĕçлеççĕ, пушă вăхăтра пире ăс параççĕ, ĕçе хăнăхтараççĕ.

Пире Яппун халăхĕн юмахĕ аса килчĕ. Пĕр хĕрарăм ачине пĕчченех çитĕнтернĕ. Вăхăт çитсен, вăл ăна тăван килтен аякка вĕренме янă. Пурăнсан-пурăнсан ачи амăшĕшĕн тунсăхласа çитет, çанталăка пăхмасăрах, çуранах киле таврăнать. Амăшĕ патне вăл, выçса кайнăскер, шăнса кӳтнĕскер, çĕрле çеç çитнĕ. Амăшĕ ăна курсан тĕлĕннĕ, апат çитернĕ. Ачи вĕренме йывăр пулнине, унăн килтех юлас килнине пĕлтернĕ. Амăшĕ хăй аллине тăсса кăтартнă, ăна вĕренме укçа нумай кирлипе йывăр ĕçре вăй хунине ăнлантарнă. Вăл ачана каллех вĕренме янă, лайăх вĕренме хушнă. Лешĕ вара, канма та ĕлкĕрейменскер, амăшĕн сăмахĕнчен иртмен. Чылай вĕреннĕ ача, йывăр чухне амăш аллисене аса илнĕ. Вĕренсе пĕтерсен вăл лайăх çĕре ĕçе вырнаçнă, амăшне йывăр ĕç те тутарман.

Çапла вĕсем, чăн-чăн аннесем, ачисемшĕн темле йывăрлăха та чăтса ирттерме хатĕр. Юратса вĕсем пире ăс параççĕ, кирлĕ чух вăрçаççĕ те. Çапах аннесенчен лайăххи, юратни никам та çук.

Пирĕн аннесем иккĕшĕ те Чуманкасси шкулĕнче ĕçлеççĕ. Ольга Михайловна Перлова ачасене истори вĕрентет, Светлана Валериановна Алексеева вĕренекенсене вырăс чĕлхипе литературин тарăн пĕлĕвĕсене пама тăрăшать. Кашни ача пекех, эпир те пирĕн аннесем пуринчен те лайăхрах тесе шутлатпăр.

"Анне маншăн идеал, эпĕ пур енчен те ун пек пулма тăрăшатăп: ĕçчен, тирпейлĕ, сăпайлă, ăслă, пултаруллă...", – тетĕп эпĕ, Катя. "Аннен кăвак куçĕ, савăнăçлă та илемлĕ сăнĕ çине пăхсанах çак тĕнчере эпир чи телейлисем пулнине туйса илетĕп", – тетĕп эпĕ, Марина.

Сăнĕпе, кăмăлĕпе тĕрлĕрен пулин те, пирĕн аннесен пĕр тĕллев – пире вĕрентесси, йывăр самантсенче пулăшасси, пурнăç çулĕ çине тăратасси.

Хăш чух аннесем пире вăрçса та илеççĕ, уншăн эпир кӳренместпĕр, мĕншĕн тесен вĕсем пире ăслăрах, лайăхрах пулма вĕрентеççĕ.

Атте-анне пурри – телей. Апла пулсан пирĕн вĕсене яланах хисеплемелле, юратмалла, пулăшмалла, унсăрăн йĕркеллĕ пурнăç пулмасть тĕнчере. Ахальтен мар ĕнтĕ Г.Н. Волков академик: "Кирек мĕнле этемĕн те пĕтесси вăл хăйĕн амăшĕ умĕнчи тивĕçне маннинчен пуçланать", – тенĕ.

Пур ача-пăча ячĕпе çапла калатпăр: "Аннесем! Эпир сире пĕтĕм чунтан юрататпăр. Эсир пурришĕн çав тери савăнатпăр, ырă ĕçĕрсемшĕн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр".

**Е. ПЕРЛОВА,**
**М. АЛЕКСЕЕВА,**
**Чуманкасси шкулĕ, 9 "а" класс.**

## Вулакан пултарулăхĕ

# Асли çуккă çăкăртан

Камсем пурнаç çĕр çинче
Çĕр ĕçĕпе ĕмĕрне,
Вĕсем пĕлеç пит аван:
Асли çуккă çăкăртан.

Ыраш çăкăрне касса
Чĕллине ална тытсан,
Асилен пепке пекех
Хăв аннӳн кăкăр сĕтне.

Пурăннă чух тĕнчере
Ан тирке эс çĕр ĕçне,
Тăрăшсамăр лайăхрах,
Пурнăç пултăр тулăхрах.

Трактор шавĕ уйсенче
Ан шăплантăр çĕрлеччен.
Ун чух тулăх кĕреке
Пулĕ сирĕн кашнинех.

Сухаламан лаптăксем
Юлмалла мар уйсенче.
Ыраш нумайрах акма
Пур çĕрте тăрăшмалла.

Мăян, пиçен таврашне
Çул парар мар уйсенче.
Çĕр ĕçне хисеплесен
Сăвап пулĕ кашнинех.

Колхозсене вăйлатма,
Тупăшсене хăпартма
Тăрăшмалла çамрăксен –
Ыранхи çĕр хуçисен.

Турай ялĕ.

**В. ПАВЛОВ,**
**пенсионер.**

## Шкулсенче

# Тунсăхламастпăр

Иртнĕ кунсенче Атапайĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта вĕренекенсем математика эрнинче пурăнтăмăр. Стена хаçачĕсем кăларассипе ăмăртса 5-6-мĕш классем çаврăнăçуллăрах пулни курăнчĕ. "Мĕн? Ăста? Хăçан?" конкурсра çиччĕмĕшсем правуртарах пулчĕç. Кроссвордсемпе ребуссен конкурсĕнче шкулĕпех хăйсен ăсталăхне кăтартрĕç. Математика эрнин тĕп тĕллевĕсем математика КВНĕпе викторининче яр уççăн курăнчĕç. Викторинăра 6-мĕш класри Н. Ступинапа 5-мĕш класри В. Ступин çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç. Ку эрнере Е.Колбасова, З. Михайлова, О. Багрова вĕренекенсем те ырăпа палăрчĕç.

**Б. МИХАЙЛОВ,**
**8-мĕш класра вĕренекен.**

## Официально

Приложение 1
К решению Моргаушского районного
Собрания депутатов
От 01.12.2006 года № С-15/5

**ПОЛОЖЕНИЕ**
**О ПОРЯДКЕ УСТАНОВЛЕНИЯ РАЗМЕРА ПЛАТЫ ЗА СОДЕРЖАНИЕ И РЕМОНТ ЖИЛОГО ПОМЕЩЕНИЯ ДЛЯ СОБСТВЕННИКОВ ЖИЛЫХ ПОМЕЩЕНИЙ, КОТОРЫЕ НЕ ПРИНЯЛИ РЕШЕНИЕ О ВЫБОРЕ СПОСОБА УПРАВЛЕНИЯ МНОГОКВАРТИРНЫМ ДОМОМ НА ТЕРРИТОРИИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА**

1. Общие положения

1.1. Положение о порядке установления размера платы на содержание и ремонт жилого помещения для собственников жилых помещений, которые не приняли решение о выборе способа управления многоквартирным домом на территории Моргаушского района (далее - Положение), разработано в соответствии со статьей 17 Федерального закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», разделом VII Жилищного кодекса Российской Федерации, Постановлением Правительства Российской Федерации от 13 августа 2006 г. №491 "Об утверждении правил содержания общего имущества в многоквартирном доме и правил изменения размера платы за содержание и ремонт жилого помещения, в случае оказания услуг и выполнения работ по управлению, содержанию и ремонту общего имущества в многоквартирном доме ненадлежащего качества и (или) с перерывами, превышающими установленную продолжительность" и Уставом Моргаушского района Моргаушское районное Собрание депутатов решило:

1.2. Настоящие Правила не распространяются на порядок, сроки и правила исчисления размеров оплаты жилья гражданами, проживающими в жилых помещениях, находящихся в многоквартирных домах Моргаушского района, в которых созданы товарищества собственников жилья, и другие объединения собственников, нанимателями и поднанимателями жилых помещений, находящихся в частной собственности физических и юридических лиц, а также гражданами, пользующимися жилыми помещениями по завещательному отказу, по договору ренты, пожизненного содержания с иждивением или по договору безвозмездного пользования жилыми помещениями.

1.3. Размер платы за содержание и ремонт жилого помещения для собственников жилых помещений, которые не приняли решение о выборе способа управления многоквартирным домом, устанавливается решением Моргаушского районного Собрания депутатов на уровне размера платы за содержание и ремонт жилого помещения для нанимателей муниципального жилищного фонда Моргаушского района.

2. Условия, учитываемые при установлении размера платы за содержание и ремонт жилого помещения для собственников жилых помещений, которые не приняли решение о выборе способа управления многоквартирными домами на территории Моргаушского района.

2.1. Плата за содержание и ремонт жилого помещения для собственников жилых помещений, которые не приняли решение о выборе способа управления многоквартирными домами на территории Моргаушского района, устанавливается в размере, обеспечивающем содержание общего имущества в многоквартирном доме в соответствии с требованиями законодательства.

3. Расчет размера платы за содержание и ремонт жилого помещения для собственников жилых помещений, которые не приняли решение о выборе способа управления многоквартирными домами на территории Моргаушского района.

3.1. Размер платы за содержание и ремонт жилого помещения для собственников жилых помещений, которые не приняли решение о выборе способа управления многоквартирными домами на территории Моргаушского района, определяется как произведение соответствующей цены, устанавливаемой решением районного Собрания депутатов, на общую площадь жилого помещения.

---

**МОРГАУШСКОЕ РАЙОННОЕ СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ**
**ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ**
**РЕШЕНИЕ**
**от 1 декабря 2006г. N С-15/3**
**Об утверждении Положения о порядке предоставления средств местного бюджета на капитальный ремонт муниципального жилищного фонда Моргаушского района**

В соответствии с Федеральным законом от 6 октября 2003 года № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», подпунктом 2 пункта 1 статьи 165 Жилищного кодекса Российской Федерации, Постановлением Правительства Российской Федерации от 13 августа 2006 г. №491 "Об утверждении правил содержания общего имущества в многоквартирном доме и правил изменения размера платы за содержание и ремонт жилого помещения, в случае оказания услуг и выполнения работ по управлению, содержанию и ремонту общего имущества в многоквартирном доме ненадлежащего качества и (или) с перерывами, превышающими установленную продолжительность" и Уставом Моргаушского района Моргаушское районное Собрание депутатов решило:

1. Утвердить Положение о порядке предоставления средств местного бюджета на капитальный ремонт муниципального жилищного фонда Моргаушского района (прилагается).

2. Опубликовать настоящее решение в газете «Знамя победы».

3. Контроль за исполнением настоящего решения возложить на финансовый отдел администрации Моргаушского района.

4. Настоящее решение вступает в силу со дня официального его опубликования.

**Глава Моргаушского района Ю.А. ИВАНОВ.**

Утверждено
решением Моргаушского районного Собрания депутатов
от 1 декабря 2006 г. N С– 15/3

**ПОЛОЖЕНИЕ**
**О ПОРЯДКЕ ПРЕДОСТАВЛЕНИЯ СРЕДСТВ МЕСТНОГО БЮДЖЕТА НА КАПИТАЛЬНЫЙ РЕМОНТ МУНИЦИПАЛЬНОГО ЖИЛИЩНОГО ФОНДА МОРГАУШСКОГО РАЙОНА**

1. Настоящее Положение о порядке предоставления средств местного бюджета на капитальный ремонт муниципального жилищного фонда Моргаушского района (далее – Положение) разработано в соответствии с Федеральным законом от 6 октября 2003 года № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», подпункта 2 пункта 1 статьи 165 Жилищного кодекса Российской Федерации, Постановлением Правительства Российской Федерации от 13 августа 2006 г. №491 "Об утверждении правил содержания общего имущества в многоквартирном доме и правил изменения размера платы за содержание и ремонт жилого помещения, в случае оказания услуг и выполнения работ по управлению, содержанию и ремонту общего имущества в многоквартирном доме ненадлежащего качества и (или) с перерывами, превышающими установленную продолжительность" и Уставом Моргаушского района

2. Настоящее Положение определяет условия и порядок предоставления управляющей организации средств местного бюджета на проведение капитального ремонта жилых домов муниципального жилищного фонда Моргаушского района (их частей, секций, отдельных элементов), находящихся в управлении управляющей организации.

3. Управляющая организация:

3.1 представляет в орган структурного подразделения администрации Моргаушского района, курирующий отрасль строительства и ЖКХ ( далее – Орган строительства и ЖКХ) следующие документы:

- титульный лист на проведение капитального ремонта муниципального жилищного фонда Моргаушского района на очередной финансовый год;
- справки о стоимости выполненных работ и затрат формы № КС-3;
- акты о приемке выполненных работ по капитальному ремонту по форме № КС-2;

3.2 ежемесячно не позднее 10 числа месяца, следующего за отчетным, представляет в финансовый отдел администрации Моргаушского района отчетные данные на возмещение расходов на проведение капитального ремонта жилищного фонда.

4. Орган строительства и ЖКХ:

4.1 принимает пакет документов;

4.2 проверяет соответствие представленных документов перечню, указанному в пункте 3.1 Положения;

4.3 при наличии всех документов и проверки - справки о стоимости выполненных работ и затрат формы № КС-3 и актов о приемке выполненных работ по капитальному ремонту по форме № КС-2 в течение 3-х рабочих дней готовит заключение о возмещении расходов либо об отказе в возмещении.

Заключение о возмещении расходов на проведение капитального ремонта жилищного фонда передается в финансовый отдел администрации Моргаушского района.

5. Финансовый отдел администрации Моргаушского района:

5.1 при получении заявки на финансирование от Органа строительства и ЖКХ проверяет на наличие бюджетных ассигнований, включает заявку в реестр, перечисляет средства управляющей организации в пределах средств, предусмотренных в бюджете Моргаушского района на очередной финансовый год.

6. Ответственность за нецелевое использование средств, предоставленных на проведение капитального ремонта жилых домов муниципального жилищного фонда Моргаушского района несет управляющая организация.

7. В случаях нецелевого использования средств, предоставленных из бюджета Моргаушского района, последние подлежат возврату в бюджет Моргаушского района в порядке, установленном действующим законодательством.